CC BY


***Чернова Нина Николаевна***
канд. пед. наук, доцент
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт
образования» Министерства образования
и молодежной политики Чувашской Республики
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# НЕКОТОРЫЕ ОСОБЕННОСТИ ОБУЧЕНИЯ ЧУВАШСКОЙ ГРАМОТЕ

***Аннотация****: статья посвящена анализу особенностей обучения чувашской грамоте. Описываются проблемы подготовки детей к обучению чтению. Раскрываются характерные трудности обучения чтению. Рассматриваются некоторые приемы обучения чувашской грамоте.*

***Ключевые слова****: звук, буква, слог, слово, подготовка к обучению грамоте, обучение чтению, особенности, приемы.*

***Аннотаци****: статья чăвашла хутла вĕрентессин уйрăмлăхĕсене тишкернипе çыхăннă. Ачасене вулама мĕнле хатĕрлемелли çинчен çырнă. Вулама вĕрентес ĕçри чи курăмлă йывăрлăхсене уçса панă. Чăвашла вулама вĕрентессин хăшпĕр мелĕсене пăхса тухнă.*

***Тĕп сăмахсем****: сасă, сасă палли, сыпăк, сăмах, вулама вĕренме хатĕрлесси, вулама вĕрентесси, уйрăмлăхсем, мелсем.*

Пур ача та шкула вĕренме çителĕклĕ шайра пымаççĕ. Ку вăл вĕсен ăс-тăн, пуплев аталанăвĕнче питĕ лайăх палăрать.

Пуплевĕ вĕсен кирлĕ пек аталанман: сăмах йышĕнче килте пĕр-пĕринпе, ас-лисемпе хутшăнма кирлĕ сăмахсем çеç. Ачасен пуплевĕнче чылай чухне кăлтăксем те тĕл пулаççĕ: сасăсене тĕрĕс калайманни, пуплев хăвăртлăхне, сасă вăйне, çўллĕшне кирлĕ пек тытса пыма пултарайманни.

Вулама вĕренме те хатĕр мар: пуплеве, сăмахăн сасă тытăмне тишкерессi йĕркеленмен.

Çўлерех палăртнă кăлтăксене пĕтерме, ачан тăван пуплевне аталантармалла: каланине, вуланине итлеме, ăнланма, тĕрĕс калаçма хăнăхтармалла, вулама-


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

çырма хатĕрлемелле, пуплеве ятарласа сăнама, тишкерме, сăмахсен сасă тата сыпăк тытăмне чухлама вĕрентмелле.

Тĕслĕхрен, ку ĕçе сăвăсемпе ĕçлесе йĕркелеме пулать. Сăвăсене аслисем (вĕрентекен, ашшĕ-амăшĕ т.ыт. те) вуланă май ачасем хыççăн калама, кирлĕ сассăн вырăнне палăртма, пăхмасăр вĕренме пултараççĕ.

Ачасене астуса юлма çăмăлтарах пулма сăвăсен калăпăшĕ пысăк мар, сăмахĕсем ăнланмалла, вĕсене çывăх пулмалла. Тĕслĕхрен:

| | |
|---|---|
| *Автан*<br>*Автан ирех авăтать,*<br>*Антуна вăл вăратать.*<br>*«Аван çывăртăн-и?» – тет.*<br>*«Айван ача ан пул!» – тет.* | *Кушак*<br>*Килте пирĕн кушак пур.*<br>*Курман пулсан – килсе кур:*<br>*Кун каçа вăл канура,*<br>*Каçпа тухать сунара.* |
| *Кăвакал*<br>*Нарт-нарт кăвакал*<br>*Шыва чăмать, çухалать,*<br>*Лăпкă шыва хумхатать.*<br>*Нарт-нарт кăвакал*<br>*Шывран тухать, çăвăнать,*<br>*Сар сăмсине вылятать.* | *Чакак*<br>*Чак-чакак! Чак-чакак!*<br>*Чакăлтатать тек чакак.*<br>*Чĕпписене вĕрентет:*<br>*«Чипер, ăслă пулăр!» – тет.* |

Сăвăпа тĕрлĕ ĕç irттернĕ май сасăпа ĕçлеме манса каймалла мар, вăл сăвăри мĕнле сăмахсенче тата ăçта тăнине палăртмалла, сăмахăн сасă моделĕпе ĕçлемелле.

Унсăр пуçне тĕрĕс тата хăвăрт каламалли сăмах майлашăвĕсемпе, предложенисемпе ĕçлесе ачасен пуплев хатĕрĕсене аталантарма, тĕрĕс калаçма вĕрентме тата унăн хăвăртлăхне ÿстерме пулать. Вĕсен тĕсĕсем:

– *ат-ат-ат – яланах шăлна тасат;*

– *ви-ви-ви – хитре-çке юрă кĕвви;*

– *ĕç-ĕç-ĕç – пултăр сан юратнă ĕç;*

– *ре-ре-ре – манăн анне пит хитре;*

– *ы-ы-ы – ытла ырă-çке ыхра;*

– *ырлăх-сывлăх ыхрара;*

– *эмма Энтипе эмелпе эмеллет;*

– *шĕвĕ – шыв мар, шурă – юр мар.*

Ку йышши ĕçсене ача шкула пырсан пĕрремĕш кунĕсенчех йĕркелемелле.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Пуçламăш классенче ачан пуплевĕпе ăс-тăнĕ кашни урокрах аталанса пырать. Çак ĕçре тăван чĕлхе урокĕсем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Ачан пуплевĕпе ăс-хакăлне аталантарнипе пĕрлех тăван чĕлхе урокĕсем ăна пуçласа хутла вĕрентеççĕ. Вулама-çырма пĕлни вара – вĕренӳ никĕсĕ.

Ачана вулама-çырма вĕрентме çăмăл мар. Сас паллисене ăса хывма, вĕсене сыпăнтарса вулама, çырма хăнăхма нумай вăхăт кирлĕ. Анчах малалла лайăх вĕренес тесен ăнланса вулама, хитре, тĕрĕс, шухăша уçăмлă палăртса калама, çырма, хутшăнма пĕлмелле. Паллах, ку хăнăхусене хăвăрт туянасси малтанхи тапхăр тухăçлăхĕнчен нумай килет. Çавăнпа учителĕн хутла вĕрентмелли уроксене пысăк ăсталăхпа, тухăçлă ирттерме тăрăшмалла. Ачасен ӳсĕмне шута илсе, вĕренӳ ĕçне вĕсен психологипе физиологи уйрăмлăхĕсене кура йĕркеленисĕр пуçне вулама-çырма вĕрентес методикăн çĕнĕлĕхĕсене, вăрттăнлăхĕсене, унăн тĕп меслечĕсемпе мелĕсене пĕлмелле, вĕсемпе тĕрĕс, вырăнлă усă курмалла.

Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ хăй пултарнă таран ачине шкула кайиччен вулама вĕрентме тăрăшать. Нумайăшĕ çапла шухăшлать: ача сас паллисене паллать пулсан вулама тивĕç. Анчах та тĕрлĕ йывăрлăха пула ача сăмахри сас паллисене тĕрĕс сыпăнтарса вулама пултараймасть.

Мĕншĕн çапла пулса тухать-ха? Сăлтавĕсем çаксем:

1. Сăмахри хупă сасăсене тăсса калама çук. Çавăнпа ача вулама вĕреннĕ тапхăрта сăмахри сасăсене сыпăнтарнă чух хупă сасă çумне [ă] сасă хушса пырать. Сăмахран, *лаша* сăмаха [лăашăа] тесе вулать.

2. Çырура пĕр сас паллиех темиçе тĕрлĕ сасса палăртма пултарать: *атă* сăмахра [т] сасă янăракан сасса [адă], *атту* сăмахра янăраман вăрăм сасса [ату], *атя* сăмахра янăракан çемçе сасса [ад’а] т.ыт.те. Ку ытларах уçă сасăран килет.

3. Чăваш чĕлхинче вырăс чĕлхинчен çыру урлă кĕнĕ сăмах нумай. Чылай чухне сăмахсене тĕрĕс вулас тесен вĕсен пĕлтерĕшĕсене пĕлмелле. Тĕслĕхе *тир* сăмаха илер. Авалхи чăваш сăмахĕ *тир* чĕр чун тирне, улма-çырла хуппине т.ыт.те пĕлтерет. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ çав сăмахпах пăшалтан е ытти вăрçă хатĕрĕнчен пемелли уйрăм вырăна палăртатпăр. Чăваш сăмахĕнче [т’], [р’] сасса


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

çемçен каламалла: [т’ир’]. Вырăс сăмахĕнче [р] сасса хыттăн каламалла [т’ир]. Ку сăмахсенче *р* сас паллипе икĕ тĕрлĕ сасса [р’], [р] палăртнă.

4. Пĕр сасса темиçе паллăпа кăтартасси те çырура анлă сарăлнă. *Ана* тата *атя* сăмахсенчи юлашки уçă сасă [а]. Сасă пĕрешкел, анчах сасă паллисем иккĕ: *а, я*. Е тепĕр тĕслĕх: сăмах пуçламăшĕнчи [э] сасса çырура э паллăпа палăртатпăр, çав сассах сăмах варринче е вĕçĕнче чухне урăх паллăпа кăтартатпăр: *эрнере* [эрн’эр’э].

Вулама йывăрлатакан сăлтавсем татах та пур. Çӳлерех асăннă йывăрлăхсем чăваш чĕлхи фонетикин уйрăмлăхĕсенчен килеççĕ.

Вулама вĕрентнĕ тапхăрта чи йывăрри вăл – сăмахри (сыпăкри) сасăсене пĕр-пĕринпе сыпăнтарма вĕрентесси. Çавăнпа ачасене сăмахри сыпăксене тишкерме, сыпăк миçе сасăран тата мĕнле сасăсенчен тăнине, сыпăкри сасăсен вырăнне палăртма хăнăхтармалла.

Тӳнтер сыпăка вулама йывăрах мар: малта тăракан уçă сас паллин сассине тăсса тăнă вăхăтра хупă сас палли çине пăхса ăна палласа илмелле, уçă сасса татмасăр хупă сасăпа сыпăнтармалла.

Тӳрĕ сыпăк та икĕ сасăран тăрать: малта – хупă сасă, хыçалта – уçă сасă [на].

Тӳрĕ сыпăксене çапла вуламалла: вулама пуçличчен малти сас палли çине пăхса ăна палласа илмелле, унтан ун хыççăнхи сас паллине палласа илсе сыпăка (хупă сасăпа уçă сасса татмасăр сыпăнтарса) вуламалла.

Тӳрĕ сыпăка вуласси çăмăл мар, мĕншĕн тесен сыпăк пуçламăшĕнчи хупă сасса тăсса тăма май çук.

Тӳрĕ сыпăксене вулама вĕрентессине çăмăллатас тĕллевпе ытларах янравлă хупă сасăсен паллисене кĕртмелле, мĕншĕн тесен вĕсен сассисене тăсса калама пулать.

Тӳрĕ сыпăка уйăрса калама вĕрентмелле. Сăмаха сыпăкăн уйăрмалла. Вĕрентекен сăмахăн малтанхи сыпăкне калать, ачасем сăмаха каласа пĕтереççĕ. Унтан ачасем малти сыпăка калаççĕ, вĕрентекен сăмаха шăппăн каласа пĕтерет.

Сыпăксене çапла уйăрса калаттарни, унтан вулаттарни – çăмăл меслет, вăл тӳрĕ сыпăксене тĕрĕс вулама пулăшать.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çак сыпăксене ачасене йĕркипе те, юпапа та вулаттармалла. Вĕсенче пĕрремĕш е иккĕмĕш сас паллисем пĕр пек пулмалла. Тĕслĕхрен, тӳрĕ сыпăксене юпапа вуланă чух иккĕмĕш сас паллисене тимлĕ пăхмалла, мĕншĕн тесен вĕсем тĕрлĕрен, пĕрремĕш сас палли пĕр пек. Йĕркипе вуланă чухне пĕрремĕш сас паллисене тимлĕ пăхмалла, мĕншĕн тесен кунта иккĕмĕшĕ пĕр пек, пĕрремĕш сас палли тĕрлĕрен.

Чăваш чĕлхинче виçĕ сасăран тăракан сыпăксем те пур.

Çак сыпăксенчен хупă сыпăк чăваш сăмахĕсенче йышлă тĕл пулать.

*Хупă сыпăка* вулама икĕ мелпе вĕрентме пулать: тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксем çине таянса: *м|ан, ма|н.*

Сыпăксене вулама вĕрентнĕ чух позициллĕ вулав уйрăмлăхĕсене шута илмелле. Сыпăкра [а], [ă], [у], [о], [ы] уçă сасăсем пулсан хупă сасăсем хытă, [э], [ĕ], [и], [ӳ] уçă сасăсем пулсан – çемçе илтĕнеççĕ.

Тӳнтер, тӳрĕ, хупă сыпăксене ачасем малтан хытă хупă сасса палăртакан сас паллиллĕ сăмахсенче вуламалла, унтан çак сыпăксенех çемçе хупă сасса палăртакан сас паллиллĕ сăмахсенче, кайран сингармонизм саккунне пăхăнман сăмахсенче вуламалла: *ат|те, ан|не, çур|кун|не.*

Позициллĕ вулава хăнăхтарнă чух вĕрентекен яланах ачасене хытă тата çемçе хупă сасăсен паллиллĕ сыпăксемпе сăмахсене танлаштарса вулаттармалла.

*Сывă тăрă ухă тупа хушă кăмăл*

*Сивĕ тĕрĕ ӳхĕ тӳпе хӳшĕ кĕмĕл*

Ачасене вулама-çырма вĕрентмелли мел нумай.

Чи анлă сарăлнă мелсенчен пĕри – танлаштару мелĕ. Ку мелпе усă курса ачасене тĕрлĕ ĕç сĕнме пулать, вăл майĕпен кăткăсланса пымалла. Тĕслĕхрен:

1. Сас паллисене танлаштарни: *а – ă, у – ӳ, у – ю, а – я, с – ç, т – д.*

2. Сыпăксене танлаштарни:

*– ан на са ыр кур;*

*– ăн нă ça ир кӳр.*

3. Сăмахсене танлаштарни:

*– шавла – шевле – ана – Анна;*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*– тăрă – тĕрĕ – сава – çава;*

*– кĕмĕл – кăмăл – паян – баян;*

*– тар – тăр – кавăн – гавань;*

*– пар – пăр – турат – турать.*

Вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта ачасене сăмах тума хăнăхтармалли çакăн пекех ĕçсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ:

1) сас паллисене сыпăнтарни: *а, ă, т (атă); а, м, р, ă, в, н (вăрман);*

2) сыпăксене суйласа илсе сыпăнтарни:

| | |
|---|---|
| *пулт-* | *-тан* |
| *вĕлт-* | *-ран* |
| *шăрт-* | *-рен* |
| *çĕ-* | *-пăрч* |
| *тă-* | *-мĕрт* |

3) сăмахсене каялла вулани: *çип – пиç, лум – мул, пас – сап, хут – тух;*

4) сăмахсенчи сас паллисене вырăнĕпе ылмаштарни:

*– çăмха салам сунар сурăх;*

*– çăмах салма суран сухăр;*

5) сăмахсем (сыпăксем) çумне сас палли (сыпăк) хушни: *ура – урам, çул – çулçă;*

6) сăмахсенче пĕр хупă сасă паллине тепĕр сасă паллипе улăштарни: *сак – çак, кĕр – хĕр, тав – сав;*

7) сăмахсенче уçă сас паллисене улăштарни:

| | |
|---|---|
| *сăрланă* | *сĕрленĕ* |
| *хăрнă* | *хĕрнĕ* |
| *хăрăм* | *хĕрĕм* |
| *вăран* | *вĕрен* |

8) тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тупни:

| *Мĕн?* | *Мĕн ту?* |
|---|---|
| *хыр (çӳллĕ)* | *хыр (кишĕр)* |
| *лар (пысăк)* | *лар (парта хушшине)* |
| *хур (шурă)* | *хур (сĕтел çине)* |

Ачасен вĕренес кăмăлне ӳстерес тĕллевпе вулама вĕрентмелли уроксенче пĕр-пĕр темăпа çыхăнтарса тĕрлĕ вăйăсем ирттерни те усăллă. Тĕслĕхрен: «Суйласа ил», «Светофор», «Тупсăмне пĕл».


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***Список литературы***

1. Волков М.К. Родной язык в первом классе / М.К. Волков, Т.В. Артемьева, Л.П. Сергеев. – Чебоксары: изд-во ЧРИО, 2007. – 274 с.

2. Ермошкина А.А. Методические указания к «Чувашской азбуке»: для учителей начальных классов / А.А. Ермошкина, С.С. Максимова, Н.Н. Чернова. – Чебоксары: изд-во ЧРИО, 2007. – 161 с.

3. Программа по чувашскому языку для 1–4 классов чувашской школы / М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева [и др.]. – Чебоксары: изд-во ЧРИО, 2008. – 88 с.

4. Чернова Н.Н. Азбука для маленьких / Н.Н. Чернова, Э.С. Атласкина, С.П. Захарова. – Чебоксары: Чуваш. книж. изд-во, 2014. – 64 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)